Республика кунне хатĕрленсе

# Муркашсем тирпейлĕхе суйлаççĕ



Балкон ҫине тухатăн та... сысни ҫухăрать, автанĕ авăтать, чăххи кăтăклать, хурĕ какалать... Юнашар тислĕк купи пăсланса ларать.

Муркашсем малашне кун пек тирпейсĕрлĕхпе ҫырлахса пурăнасшăн мар пулас. Октябре 50 ҫул ятлă урамра выльăхсем усрама тунă хуралтăсене пăсма пуҫларĕҫ.

Ял ҫыннисене выльăхчĕрлĕх тытнăшăн ӳпкелеме те ҫук. Ĕҫ укҫине тивĕҫлипе тӳлесен, пенсие ҫителĕклĕ парсан никамах та хушма ĕҫпе асапланас ҫук. Пурăнмалла, ҫемьене тăрантармалла-ҫке.

Апла пулсан влаҫ органĕсен ҫынсене пулăшмалла. Ку хутĕнче влаҫрисемпе кунта пурăнакансем пĕр шухăш патне пыни савăнтарать. Майне туса парсан ял ҫыннисем те хирĕҫ мар иккен. Балкон айĕнчи хуралтăсене пăссан вĕсен хуҫисене ҫĕнĕ вырăнта сарайсем тума ҫĕр лаптăкĕсем уйăрса параççĕ. Паллах, кун пек чухне пурин те панă сăмаха тытма пĕлмелле.



Вуншар ҫул Муркашра юхăннă сарайсен ыйтăвне татса парайман. Пурнăҫ та улшăнать, эпир те улшăнатпăр. Влаҫăн вара ҫынсене ялан ăнланма пултармалла, пулăшма пĕлмелле. Кун пек чухне ял ҫыннисем те парăмра юлмĕҫ.

Кăҫалхи июнь уйăхĕнче Муркаш Республика кунне уявлать. Аякран вун-вун хăна килĕ. Хăнасен асĕнче вара Муркашсен ырă кăмăлĕ кăна мар, тирпейлĕ те таса урамĕсем юласса та шанас килет.

**А. ИВАНОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: кивĕ хуралтăсене пăсма тытăннă; ватăлнă йывăҫсене те касса тирпейлемелле.**

**О. СУВОРОВА сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Ырă ĕҫсен ҫулталăкĕ пуҫланчĕ

# Ашшĕ-амăшĕсем шкула пулăшаççĕ

2008 ҫула ЧР Президенчĕ Н.В.Федоров Ырă ĕҫсен ҫулталăкĕ тесе палăртрĕ. Ярапайкассинчи вăтам шкулшăн ҫак ҫул чăннипех те ырă ĕҫсенчен пуҫланчĕ. Ырă ĕҫе тăваканĕсем вара – 8 класра вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем. Хĕллехи каникулăн сивĕ кунĕсене вĕсем сая ямарĕҫ. Хăйсен вăйĕпе юсав материалĕсем туянса класс сăнне тĕпрен улăштарчĕҫ. Класри пĕр ачан ашшĕ-амăшĕ те ĕҫе хутшăнмасăр юлмарĕ. Шкул директорĕ Николай Васильевич Кудряшов, класс ертӳҫи Маргарита Викторовна Александрова пурне те чĕререн тав турĕҫ.

Калас пулать, кун пек ĕҫ шкулта пĕрремĕш хут мар. 2005-2007 ҫулсенче пуҫламăш классен тăвата пӳлĕмне ашшĕ-амăшсен вăйĕпе тĕпрен юсаса ҫĕнетнĕ. Вĕсем пулăшмасăр шкул ҫак ĕҫсене туса ирттереймен пулĕччĕ. Хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕсем икшер класа юсанă ҫĕре хутшăнчĕҫ. Вĕсем ҫаксем: Андрей Николаевичпа Татьяна Львовна Алексеевсем, Александр Ананьевичпа Любовь Александровна Петровсем, Ангелина Аркадьевнапа Андрей Геннадьевич Сорокинсем, Анатолий Николаевичпа Фаина Николаевна Андреевсем, Вячеслав Валериановичпа Валентина Ивановна Соколовсем, Евгений Валерьевичпа Альбина Петровна Ярусовсем, Валентина Николаевнапа Евгений Николаевич Васильевсем.

Шкулти пур мероприятие те ашшĕ-амăшĕсем хаваспах хутшăнаççĕ, хăйсен пултарулăхĕпе те паллаштараççĕ. Акă иртнĕ ҫул Любовь Александровна Петрова хăйĕн тĕррисемпе паллаштарчĕ. Хаҫат кăларас ĕҫе те хаваспах хутшăнать вăл. Чăн-чăн аптраман тавраш теес килет ун ҫинчен. Пирĕн шкулта вĕренекен ачасен ашшĕ-амăшĕсем ҫапла пулнишĕн савăнатпăр, вĕсене чĕререн тав тăватпăр.

Тĕрлĕрен спорт мероприятийĕсенче те ашшĕ-амăшĕсем ачисемпе юнашар. Ку вĕренӳ ҫулĕнче районта ирттернĕ «Атте, анне тата эпĕ – спортпа туслă ҫемье» ăмăртура Ефимовсен ҫемйи 3 вырăн йышăнчĕ. Кун пек ăмăрту шкул шайĕнче те иртнĕ. Унта 6 ҫемье хутшăннă. Вĕсенчен Ирина Алексеевнапа Александр Алексеевич Ефимовсем 2 класра вĕренекен Алексей ывăлĕпе тата Валерий Всеволодовичпа Алина Петровна Андреевсем 2 класра вĕренекен Руслан ывăлĕпе 1 вырăн йышăнчĕҫ.

Хальхи вăхăтра ашшĕ-амăшĕсем тата шкултан вĕренсе тухнă ачасем пулăшнипе ирĕклĕ кĕрешӳ секцине уҫма хатĕрленеççĕ. Уйăрса панă пӳлеме усă курма майласа ҫитереççĕ. Ҫак ĕҫсене тума «Натали» ООО директорĕ С.В. Крылов пулăшать. Секцие Александр Михайлович Паргеевпа Сергей Валерьевич Крылов ертсе пырĕҫ. Юсав ĕҫĕсене Е. Паргеев, В. Максимов, Э. Потянов, А. Григорьев хăйсен вăйĕпе тăваççĕ.

Шкул ку ҫул  икĕ проектор тата тепĕр компьютер илме ĕмĕтленет. Учительсем вĕсемпе ĕçлеме хатĕр.

Ҫулталăк пуҫламăшĕн пĕрремĕш уйăхĕнчех ҫакăн чухлĕ ырă ĕҫ пулчĕ. Малашне те ҫапла пуласса шанса тăратпăр.

**Н. ВАСИЛЬЕВА, шкул директорĕн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕҫлекен ҫумĕ.**

Культура пурнăҫĕ

# Пирĕн ялта кичем мар

Мăн Шашкар ял клубĕшĕн 2007 ҫул ăнăҫлă иртрĕ. ЧР Президенчĕн Указĕ тăрăх 2007 ҫул Ача ҫулталăкĕ пулчĕ. Эпир хамăр ял клубĕнче ачасем ҫине татах та тимлĕрех пăхма, вĕсемпе татах та нумайрах, интереслĕрех мероприятисем тума тăрăшрăмăр. Ҫав ҫулта эпир Ильинка ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ Б.А. Сапожников пире ăнланса, пулăшса пынипе сахал мар интереслĕ мероприятисем туса ирттертĕмĕр. Тĕслĕхрен, Шашкар ялĕн уявне ирттертĕмĕр.

Темле пысăк мероприяти ирттерес пулсан та пире яланах спонсорсем пулăшса, хавхалантарса пыраççĕ. Пирĕн спонсорсем хушшинче депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В.И. Кожанов, «Волга» ООО ертӳҫи Ю.В. Данилов, Шашкар ялĕн активисчĕ Т.П. Мерлова. Ҫавăн пекех пирĕн тăрăхра мĕн авалтанпах пыракан тепĕр халăх уявĕ – Мăн Ҫăварни. Ку уява хăйсен тăванĕсене сума суса пĕтĕм таврари тăванĕсемпе, пĕлĕшĕсемпе тăван ял-йышпа юрласа та ташласа, спорт вăййисемпе те ăмăртса кĕтсе илеççĕ. Уявра пĕтĕм халăх, ял-йышăмăр савăнать.

Спорт енĕпе татах вăйăсемпе ăмăртусем иртрĕҫ. Ачасем те тĕрлĕ вăйăсене хутшăнчĕҫ. Капăрлатнă лашасем те сахалах мар пулчĕҫ.

Мĕн туса ĕлкĕртĕмĕр-ха эпир иртнĕ ҫулта клуб базине лайăхлатас, ҫирĕплетес, анлăлатас тесе? Клуб ертӳҫи кабинетĕнче урай хăмисене, фойери мачча хăмисене улăштарса тата оргалитпа ҫиелтен ҫапса тирпейленĕ, кивелнĕ электричество пралукĕсене пĕтĕмпех тĕплĕн ҫĕннисемпе улăштарнă. Тамбурти, клуб ертӳҫин кабинетĕнчи урай хăмисене, алăксене, фойери стенасене сăрланă. Кочегарка кăмакине тепĕр хут юсаса ҫирĕплетсе хута янă. Музыка аппарачĕ пирки калас пулсан музыка центрĕнчен килти кинотеатра ҫити аталанма май пулчĕ.

Ҫак иртнĕ 12 уйăх хушшинче хамăр программăсене ҫĕнĕлĕхсем кĕртсе, вĕсемпе мероприятисене татах та тарăнрах, интереслĕрех тума тăрăшрăмăр.

Мăн Ҫăварни уявне вара йĕлтĕрпе ăмăртассинчен пуҫларăмăр. Ку спорт ăмăртăвĕ Шатракасси шкул директорĕ, Шатракасси шкулĕнчи физкультура учителĕ, унсăр пуҫне хамăр ял ачи Н.А. Мерлов ертсе пынипе пысăк шайра иртрĕ. Чи аслисен шутĕнче Вăрманкассинчи 70 ҫулхи ветеран Н.И. Мухин пулчĕ.

Ҫĕнĕ ҫула татах та ҫĕнĕлĕхсемпе, конкурссемпе кĕтсе илтĕмĕр. Вĕсенчен пĕри вăл – кантăксем капăрлатасси.

Ача ҫулĕнче ял клубĕ ҫумĕнче ҫуллахи спорт площадкине тасатса тирпей-илем кĕртме ĕлкĕртĕмĕр, чи кĕҫĕннисем валли клубран инҫех те мар ашшĕсем савăнăҫ каруселĕ йĕркелесе лартнă. Ку ĕҫшĕн С. Федорова питĕ пысăк тав сăмахĕ калас килет.

Ҫĕнĕ ҫулта мини-футбол площадки хута ярасшăн. 2008 ҫул – Ырă ĕҫсен ҫулĕ. Ял клубĕ ҫумĕнчи пултарулăх ушкăнĕ ваттисене хисепе курса Мăн Сĕнтĕрте вырнаҫнă ваттисен ҫуртне ҫĕнĕ ҫул уявне ирттерме ҫул тытнă. Чĕннĕ ҫĕре хаваспах Шашкар енчи Хĕл Мучипе Юр Пике те ҫитнĕ. Вĕсем ветерансемпе тĕрлĕ савăнăҫлă вăйăсемпе конкурссем ирттернĕ.

Уявăн иккĕмĕш пайĕ ял клубĕ ҫумĕнчи художество пултарулăх ушкăнĕн пултарулăхĕнчен тăнă.

Ку вăл пулса иртнĕ ĕҫ ҫулĕ. Мĕн кĕтет-ха ҫĕнĕ ҫулта пирĕн клуба? Кунта тумалли ĕҫсем питĕ нумай-ха. Пирĕн пата пирĕн клубшăн укҫа-тенкĕ хĕрхенмен Хĕл Мучи килсен Шашкар ял халăхне питĕ пысăк парне пулĕччĕ. Ахальтен мар пулĕ 2008 ҫул – Ырă ĕҫсен ҫулĕ. Ырлăхĕ вара пирĕн пата та ҫиттĕрччĕ. Культура ĕҫне аталантарасси, йăла-йĕркене ҫирĕп тытса пырасси, ҫĕнĕлĕхсемпе усă курса ĕҫлесси, паллах, пĕршерĕн, уйрăмшарăн тумалли ĕҫ мар. Пĕр-пĕрне ăнланса та пулăшса пырсан кăна ĕҫ кал-кал кайĕ, пурнăҫ та илемлĕрех пулĕ.

**И. ТАЙМАСКИНА, Мăн Шашкар ял клубĕн ертӳҫи.**

Районти шалти ĕҫсен пайĕнче

# Кашни йĕркене пăсакана ответ тыттармалла



***Пирĕн кулленхи пурнăҫ тăнăҫлăхĕ, эпир туса ирттерекен ĕҫ-хĕл хамăр патри обществăлла йĕркелĕхпе те тӳрремĕнех ҫыхăннă. Ҫавна май эпир паян районти шалти ĕҫсен пайĕн пуҫлăхне Евгений Дмитриевич МАКАРОВА калаҫăва чĕнтĕмĕр, шалти ĕҫсен пайĕн иртнĕ ҫулхи ĕҫĕ-хĕлĕ пирки каласа пама ыйтрăмăр.***

– Пирĕн тĕп тивĕҫ граждансене обществăлла йĕркелĕхпе тата хăрушсăрлăхпа тивĕҫтерессი пулса тăрать. Ку енĕпе иртнĕ ҫул мероприятисен комплексне туса ирттертĕмĕр. Ҫавна май оперативлă лару-тăру районта тивĕҫлĕ шайра. Террористла тата чрезвычайлă лару-тăру пулăмĕсем пулмарĕҫ.

Йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисене уҫса парасси пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Оперативлă следстви ушкăнĕ асăннă преступленисен тĕслĕхĕсемпе вăхăтра ҫула тухать. Иртнĕ ҫул районĕпе 603 преступлени регистрациленĕ. Ку вăл унччченхи ҫулхинчен 21,9 процент сахалрах. Районти шалти ĕҫсен пайне тĕрлĕрен ҫăхавсемпе сĕнӳсем тăратасси вара нумайланчĕ. 2006 ҫулта кун пеккисем 4253 пулнă пулсан, иртнĕ ҫул – 4926.

Пысăк пĕлтерĕшлĕ кăтарту вăл – преступленисене уҫса парасси. Ку кăтарту иртнĕ ҫул унччченхи ҫулхинчен 16,1 процент ӳсрĕ, 76,1 процентпа танлашрĕ. Ҫав вăхăтрах республикипе преступленисене уҫса параслăх 56,3 процентпа танлашать. 2006 ҫулта 347 преступление, 2007 ҫулта вара 431 преступление уҫса панă.

Хальхи вăхăтра ытларах терроризм, йĕркеленнĕ преступность, пĕтĕмĕшле уголовлăй преступность, хĕҫ-пăшалпа саккунсăр усă курнин, наркотиксемпе ҫыхăннă ыйтусемпе ытларах ĕҫлеме тивет. 2007 ҫулта хĕҫ-пăшалпа ҫыхăннă преступленисем пачах пулман. Апла пулин те оперативлă шырав ĕҫĕсем туса ирттерсе 400 грамм тратил, 2 граната тата патронсем туртса илнĕ. Хĕҫ-пăшалпа саккуна пăсса усă курнин 5 тĕслĕхне, наркотиксемпе ҫыхăннă 6 преступление уҫса панă. Наркотикла япаласенчен героин 17,8 грамм туртса илнĕ. Ку ыйтусене малашне те куҫ ытамĕнчен кăлармастпăр.

Криминаллă милици енĕпе иртнĕ ҫул 254 преступлени тунă. Ку кăтарту унччченхи ҫулхинчен ӳсрĕ. Асăннă преступленисене уҫса параслăх вара 73 процент пулчĕ.

Терроризм тĕслĕхĕсене асăрхаттарас енĕпе пирĕн пай ҫине тăрса ĕҫлет. ЧР Шалти ĕҫсен министерстви палăртнă мероприятисене кирлĕ пек пурнăҫласа пыма тăрăшатпăр. Кун пек ĕҫпе ҫыхăнма пултарнисене пурне те шута илнĕ. Ҫавна май йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисем тăвасси чакса пырать. Халиччен пулнă йĕркесĕрлĕхе пĕтерме, преступленисене уҫса пама пирĕн вăйсем те ҫителĕклĕ, опыт та пур.

Ҫитменлĕхсем пирки те асăнмасăр май ҫук. Унччен судпа айăпланнисем тĕлĕшпе ытларах ĕҫлемелли куҫ кĕрет. Акă 2006 ҫулта унччен судпа айăпланнисем 91 преступлени тунă пулсан, ку хисеп иртнĕ ҫул 126-на ҫитрĕ. Ятарласа вут тивертесси те 2 тĕслĕхрен 8-а ҫитрĕ. Палăртмалла, вĕсене пурне те уҫса панă. Обществăлла вырăнсенче тунă преступленисен хисепĕ 13-рен 25-е ҫитрĕ. Кусем вĕсем документсем, сумкăсем, паспортсем, кĕсье телефонĕсем вăрланă тĕслĕхсем.

Иртнĕ ҫул пĕтĕмпе, унччченхи ҫулхисене шутласан, 24 преступник шыравра шутланнă. Унччен ку кăтарту 45 ҫынпа танлашнă. 19 ҫынна тупса палăртма май килчĕ. Ку кăтарту республикăри вăтам кăтартуран 6 процент чухлĕ лайăхрах.

Преступленисене уҫса парасси унччченхинчен 4,1 процент чакрĕ пулин те, ку кăтарту республикăри вăтам кăтартуран 13,9 процент пысăкрах.

Право йĕркелĕхĕпе обществăлла хăрушсăрлăха тивĕҫтерессипе обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕ пысăк ĕҫ туса ирттерет. Вăрланин тĕслĕхĕсене асăрхаттарассипе тата уҫса парассипе чылай ĕҫсем туса ирттернĕ. Иртнĕ ҫул вăрланин тĕслĕхĕсене 133 регистрациленĕ, вĕсенчен 45,3 процентне уҫса панă. ЧР Шалти ĕҫсен министерствин тата районти шалти ĕҫсен пайĕн планĕсемпе килĕшӳллĕн тĕрлĕрен профилактика мероприятийĕсем, операцисемпе рейдсем 122 ирттернĕ.

Ҫавна каласа хăварасшăн. Обществăлла йĕркелĕхе тивĕҫлĕ шайра тытса тăрасси районти шалти ĕҫсен пайĕн тĕп тивĕҫĕ пулин те, кунта вырăнти самоуправлени органĕсемпе, ҫынсемпе тачă ҫыхăнса ĕҫлемесĕр те май ҫук. Ҫапла пулсан кăна уҫса панă преступленисен шучĕ те ӳсĕ, профилактика енĕпе те кăтартусем лайăхланĕҫ.

Январĕн 11-мĕшĕнче хамăрăн ĕҫсен иртнĕ ҫулхи кăтартăвĕсене пĕтĕмлетрĕмĕр. Унта Чăваш Республикин Шалти ĕҫсен министерствин, суд приставĕсен, прокуратура представителĕсем, район пуҫлăхĕ те пулчĕҫ. Пĕтĕмĕшле илсен, районти шалти ĕҫсен пайĕн отчетлă тапхăрти ĕҫне япăх мар хак панă. Январĕн 18-мĕшĕнче иртнĕ коллегире те ҫавнах палăртса хăварнă.

Хăйсен ĕҫне тивĕҫлипе пурнăҫлакансем пирĕн коллективра сахал мар. Чи малтанах кунта районти шалти ĕҫсен пайĕн пуҫлăхĕн ҫумĕсене Е.И. Плечовпа В.А. Григорьева, уголовлăй шырав уйрăмĕн пуҫлăхне О.Н. Потрякова, аслă оперуполномоченнăя М.М. Мясников майора, оперуполномоченнăя С.В. Егоров капитана, кинолога А.В. Лаптев аслă прапорщика, обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн пайĕн пуҫлăхне В.И. Михайлов майора, ҫул ҫитмен ҫамрăксем енĕпе ĕҫлекен инспекторсене М.А. Конузинана, Л.Г. Плечована, милицин участокри инспекторне Е.А. Пугачев майора асăнса хăвармалла. Пирĕн следовательсем республикăра чи пултаруллисем шутланаççĕ. К.И. Петров вĕсен ĕҫне-хĕлне тĕрĕс йĕркелесе ертсе пырать. А.А. Кабуркин аслă лейтенант, Е.В. Круглова майор, дознаватель Л.А. Ядыкова майор, Е.В. Когулина лейтенантпа Н.М. Пушкина аслă лейтенант чи ырă сăмахсене тивĕҫ.

Професси ăсталăхне ӳстерсе пырассине те манăҫа кăлармастпăр. Шалти ĕҫсен пайĕн 17 сотрудникĕ хальхи вăхăтра ĕҫленипе пĕрлех заочно майпа хăйсен пĕлĕвне ӳстерет. Ертсе пыракан шайри пур сотрудниксем те аслă пĕлӳ илнĕ ҫынсем.

Малтанхи вăхăтра шалти ĕҫсен пайĕнче ĕҫлекенсем тĕлĕшпе вакансисем пулнă пулсан, халĕ ку ыйтăва татса панă. Шалти ĕҫсен пайĕнче вăй хуракансен авторитечĕ ӳссе пынипе ҫыхăнтармалла ҫакна. Ĕҫ укҫи те ӳссе пырать. Февраль уйăхĕнчен ăна 9 процент ӳстерме пăхнă.

Юлашкинчен ҫавна кăна каласа хăварасшăн. Пирĕн коллектив ĕҫлеме пултараканскер. Кунта хăйсен ĕҫне пĕлсе, ответлăха туйса пурнăҫлакансем вăй хураççĕ. Апла пулсан право сыхлавĕпе обществăлла йĕркелĕхе тивĕҫтерессинче малашне ăнăҫусем те ытларах пулĕҫ.